**Пайкилтри ача-сачĕнчи кĕçĕн ушкáнра**

**«Мăн кун» темăпа ирттернĕ уяв сценарий**

Филиппова Елена Ивановна пурнăçланă

## «Мáн кун уяве»

**Ĕç тĕллевĕ:** ачасене вáйá уявсене хутшáнма хавхалантарасси, хамáр пурáнакан вырáнти календарлá халáх праçникĕсене ирттерме хутшáнтарасси.

**Малтан ирттернĕ ĕç**: ачасемпе калаçу ирттерне, вáйáсем выляна́, юрáсем, сáвáсем вĕреннĕ; ўкерчĕксем ўкернĕ, иллюстрацие сáнаná, видеофильмсем пáхнá.

**Кирлĕ материал**: çытар, чáх (тетте), карçинкка (карçинкка çинче улáм), йывáçран касса якатнá çáмарта (çáмартине сарá тĕспе сáрланá), çáпата, чĕрĕ çáрта, йывáç кашáк, шáши (тетте), пысáк çáмарта (хутран çыпáçтарса тунáскер), пĕçернĕ çáмартасем (сáрласа илемлетнĕ).

**Ĕç йĕрки:**

**Ертўçĕ**(чáваш халáх кĕпипе): Ачасем паян пирĕн питĕ пысáк уяв – Мáн кун. Мĕнле уяв-ха вáл Мáнкун? Мáн кун вáл- Христос вилĕмĕнчен чĕрĕлсе тáнине асáнса тáвакан праçник. Унран пысáкрах Уяв урáх çук. Вáл мĕн пур уявсен Уявĕ. Çавáнпа та çынсем çакá уява хисеплесе килтен киле çўресе юрланá, ташланá, çáмарта шаккаса çинĕ. Çынсем кáна мар, хĕвел те ташласа çўлелле хáпарнá. Вáл та питĕ саваннá. Çынсем пĕр-пĕрне хирĕç тĕл пулсан: «Христос чĕрĕлнĕ» - тесе виçĕ хутчен каланá. Ăна хирĕç: «Чáн-чáнах чĕрĕлнĕ»,- тесе виçĕ хутчен тепĕр çынĕ хуравланá. Юлашкинчен виçĕ хутчен чуптуна́. Пĕчĕк ачасем валли çĕнĕ кĕпесем илсе панá. Ачасем çĕнĕ кĕпесем тáхáнса урама выляма тухнá.

- Айтáр-ха, ачасем, эпир те сирĕнпе вáййа тухар. (Ачасем чáваш халáх тумĕсемпе карталанса тáрса чáваш халáх юррипе утаççĕ. ( «Çĕмĕрт çеçки çурáлать»)

**Ертӳçĕ:** Çак кун макáрма, кулянма, пĕр-пĕринпе вáрçáнма юрамасть. Яланах савáнáçлá пулас пулать.

Ташá «Линка-линка»

Атьáр ташá пуçлар-и?
Ура тапса ташлар-и?
Атьáр ташá пуçлар-и?
Ура хуçса ташлар-и?

**Ертӳçĕ:** Ташá та ташларáмáр, халĕ вара вáйá выляса илер.

Вáйá «Ларать Миша»

**Ертӳçĕ:** Ачасем ташларáмáр, юрларáмáр, вáйá та вылярáмáр. Халĕ вара хáнана каяр пуль. Кĕтсе ивáнчĕç пуль пире. Кам пирĕн чи матан пӳрте кĕрет , áна çытар çине лартаççĕ. Мĕншĕн-ши çытар çине лартаççĕ-ха áна? Мĕншĕн тесен, чáх-чĕпсем, хур-чĕпписем áнса тухчĕр теççĕ. Çытар çинче ларнá чух тӳрĕ ларас пулать, асту чĕпсем тӳрĕ лармасан, тухмаççĕ. (Юрá кĕввипе пурте карталанса тáрса утаççĕ. Малта ёртӳçĕ юрласа утать):

Мáн кун, мáн кун терĕмĕр,
Мáн кун, мáн кун терĕмĕр,
Мáн кун паян çитрĕ-те
Мáн кун пáтти çиетпĕр,
Мáн кун пáтти çиетпĕр.

( Пӳрт умне çитсен, асаттепе асанне хирĕç тухаççĕ. Чáваш тумĕсемпе)

**Асанне:** Иртĕр, иртĕр, малалла. Кам-ха малтан кĕрет сирĕн, çавна çытар çине лартасчĕ-ха, чĕпсем лайáх тухчĕр. (Пĕр ачине çытар çине лартаççĕ, теприсем пукансем çине вырнаçса лараççĕ).

**Ертӳçĕ:** Ачасем сирĕн юмах итлес килеть-и? Апла пулсан итлĕр. (Ертӳçĕ вырáс халáх «Чáпар чáхá» ятлá юмаха калать. Ачасен ашшĕ-амáшĕсем çакá юмаха вылляса кáтартса пыраççĕ)

-Пуранна́ тет, карча́кпа старик (Карча́кпа старик пӳрт хыҫӗнчен тухаҫҫӗ. Старик ҫа́пата та́вать, карча́к ҫа́м арлать). Вӗсен ча́пар ча́ха́ пулна́ тет (Ертӳҫӗ ча́пар ча́хне ка́тартать. Ка́т-ка́тик, ка́т-ка́тик – тесе йа́ва ҫине лартать). Пӗррехинче ча́пар ча́ха́ ҫа́марта туса пана́ тет. Ахаль ҫа́марта мар, ылта́нни. (Ча́х ҫа́марта туса аннине ертӳҫе ка́тартать. Старик йа́варан ҫа́мартана илсе карча́к патне пырать).

- Карча́к, пирӗн ча́х ҫа́марта турӗ. Ҫа́мартийӗ сап-сара́ тӗслӗ. Кур-ха тет, старик.

-Ча́нах-та и? Мӗнле сава́на́ҫ-тет карча́кӗ.

-Ытла та илемлӗ ҫа́марта, ҫӗмӗрсе па́хар-и, карча́к?-тет старикӗ.

-Ҫӗмӗрсе па́хар, ара – тет карча́кӗ.

(Старик ҫа́мартана йыва́ҫ каша́кпа ҫапса па́хать, ҫа́марта ҫӗмӗрӗлмест. Карча́кӗ те ҫапса па́хать, ҫа́марта ванмасть. Ҫа́мартана сӗтел ҫине хураҫҫӗ).

-Старик, атя-ха кил-картишне выльа́хсене па́хма тухар, кайран тепре шаккаса па́ха́па́р. (Кача́кпа старик тухса каяҫҫӗ).

**Ертӳҫӗ:** сасарта́к ша́ши сӗтел ҫинче чупса пырать те, хӳрипеле ҫа́мартана лектерет. Ҫа́марта урайне ӳксе ҫӗмӗрлет. (Ҫав ва́ха́тра пӳрте карча́кпа старик кӗреҫҫӗ. Ҫа́марта ҫӗмӗрӗлнине курсан, иккӗшӗ те мака́рма пуҫлаҫҫӗ)

-А-а-а, мӗнле пура́на́па́р. Ша́ши пирӗн ҫа́мартана ҫӗмӗрсе па́рахна́-теҫҫӗ.

Чахӗ вӗсене калать: Ка́-ка́-ка́-ка́, ан мака́р асатте, ан мака́р асанне. Эпӗ сире татах ҫа́марта туса пара́п, ылта́нни мар, ака́ ҫака́н пек ҫа́марта! (Ертӳҫӗ йа́варан пыса́к ҫа́марта ҫӗклесе илсе ка́тартать).

**Ертӳҫӗ:** ачасем, па́ха́р-ха, епле илемлӗ ҫа́марта. Мӗнлерех пыса́кка́ ва́л! Ҫака́н пек пыса́к ҫа́мартана пире ча́пар ча́ха́ Ма́нкун ячӗпе туса пачӗ. Ку ҫа́марта ӗнтӗ пурин валли те ҫитет. (Ҫа́мартана ертӳҫӗ силлентерсе па́хать. Унта темскер пурри ҫинчен калать)

-Ҫа́марта а́шӗнче темскер пур пулмалла. Ша́ка́лт-ша́ка́лт саса́ илтӗнет. Мӗнле пӗлмелле-ши? Паҫа́рхи пек ша́ши ҫӗмӗрсе ан па́рахта́р тесен, мӗн

тумалла ши? – А-а, пĕлетĕп. Эпир пурте сирĕнпе çáмарта тавра тáратпáр та ташлатпáр. Çáмарта вара пирĕн хáех усáлать. (Ташá «Чáван ташá» кĕввипе ташлаççĕ. Çáмарта усáлать. Унáн áшĕнче чáн-чáн çáмартасем).

**Ертӳçĕ:** Ачасем, пáхáр-ха, кунта татах çáмартасем. Çáмартисем епле илемлĕ тĕслĕ. Ертӳçĕ ачасене çáмартисене валеçсе парать. Ачасем çáмартасемпе выляççĕ.( «Паттáрла вáйá»). Юлашкинчен сĕтел хушшине ларса çиеççĕ.

## Хыççáмах

Мáн кун уява ирттерсе янá хыççáн ачасем чылайччен чáваш тумтирне хывмасáр çӳрерĕç. Вĕсем тĕкĕр умĕнчен кайма пĕлмерĕç. Сикрĕç, вылярĕç, савáнчĕç. Вĕсене çакá уяв питĕ килĕшрĕ. Пĕтĕмлетс каласан, хамáрáн чун пуянлáхне пирĕн мĕнле те пулсан упраса хáварма тáрáшмалла.

## Усá курнá литературá:


1. Пĕчĕккисен кĕнеки: Хрестомати / Т.В.Артемьева,Г.Ф.Трофимов-Шупашкар:Чáваш кĕнеке издаельстви,2006.-319с.
2. Ягодова Л.Г., Махалова И.В. Чувашские детские игры: Методическое пособие для воспитателей дошкольных образовательных учреждений.-Чебоксары,2005.-135с.
3. От рождения до школы. Примерная общеобразовательная программа дошкольного образования (пилотный вариант) / Под ред. Н.Е.Вераксы,

Т.С.Комаровой,М.А.Васильевой.-3-е изд.,испр. И доп.-М.:Мозаика-Синтез,2014.-368с.

4. Ачасене шкулччен вĕрентмелли тĕслĕх программа. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературáпа палаштарасси. Вырáс (тáван мар) чĕлхине вĕрентерессиi/ Т.В.Артемьева, С.Г.Михайлова, Н.В.Иванова.-Шупашкар:Чáваш кĕнеки изд-ви,2015.-95с.
5. Ачасене шкулччен вĕрентмелли программа / Л.В.Кузнецова.-Шупашкар:Чáваш Республикин вĕрену институчен издательстви,2009.-367с.
6. Праздники на земле Улыпа. Методическое пособие для дошкольных образовательных учреждений /Под ред. Р.Б.Кузьминой-Чебоксары :Изд-во Л.АНаумова, 2006.-204с.
7. Васильев Н.С. Авалхи йала- йеркесем.- Шупашкар: «Сене Вахат»,2017.-168с.,ил.
8. Портнова З.Н. Ача-пáча ваййисем: вĕрену кĕнеки.-Шупашкар,2016.-100с.